25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
НОЯБРЬ
10
ЫТЛАРИКУН
262 (6197) №

# Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

## Оборона Халăх Комиссарĕн Приказĕ

### 1942 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕ. Мускав хули.

### № 345.

**Юлташсем—красноармеецсем, командирсемпе политработниксем, партизансемпе партизанкăсем! Совет Союзĕнчи ĕççыннисем!**

**Совет Правительстви тата пирĕн большевикла парти ячĕпе Сире Октябрьти Социализмлă Аслă революци çĕнтернĕренпе XXV çул тултарнă кун ырă сунса саламлатăп.**

**Чĕрĕк ĕмĕр каялла рабочисемпе хресченсем, большевиксен партийĕ тата аслă Ленин ертсе пынипе, пирĕн çĕршывра совет влаçĕ туса хучĕç. Çак вăхăт хушшинче Совет Союзĕнчи халăхсем мухтавлă çула утса тухрĕç. 25 çул хушшинче пирĕн Тăван çĕршыв индустриллĕ тата колхозлă социализмлă хăватлă держава пулса тăчĕ. Совет Государствинчи халăхсем, хăйсене валли ирĕклĕх тата никама пăхăнманлăх çĕнсе илсе, никам аркатайми тăванла туслăхра пĕрлешрĕç. Совет çыннисем кирек мĕнле пусмăрлăхран та хăтăлчĕç тата çине тăрса ĕçлесе хăйсене валли пуян та культурăллă пурнăç турĕç.**

**Паян Октябрьти Социализмлă Аслă революци XXV çул тултарнине пирĕн çĕршыври халăхсем нимĕçсен фашистла захватчикĕсене тата Европăри вĕсемпе пĕр каварлисене хирĕç пыракан хаяр кĕрешÿ вăхăтĕнче кĕтсе илеççĕ.**

**Кăçалхи çул пуçламăшĕнче, хĕл вăхăтĕнче, Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла войскисене чылай вăйлă çапса аркатрĕ. Нимĕçсем Мускав çине тапăннине сирсе ярса, вăл пуçарулăха хăйĕн аллине илчĕ те наступлени тума тытăнчĕ, нимĕç войскисене хĕвеланăçнелле хăваласа кайрĕ, пирĕн çĕршывăн чылай облаçĕсене нимĕç хуçалăхĕнчен ирĕке кăларчĕ. Хĕрлĕ Çар, çапла вара, хĕлле условисенче нимĕçсен фашистла войскисене çĕнтерме пултарнине кăтартса пачĕ.**

**Анчах çак çулхи фронтри лару-тăру чăр енне улшăнчĕ. Европăра иккĕмĕш фронт çуккине усă курса, нимĕçсем [illegible] Украинăри фронта, [illegible] Çав [illegible] нимĕçсен фашистла войскисем Кăнтăрта малалла кусма тата Сталинграда, Хура тинĕс çыранне, Грозный хулине, Закавказье патне [illegible] пултарчĕç.**

**Чăн та, Мускав Хĕвеланăçĕнчен [illegible] пирĕн çĕршывăн столицине тылран пырса çапмалли нимĕçсен планне Хĕрлĕ Çарăн [illegible] путлантарса ларчĕ. [illegible] Сталинград патĕнче [illegible]**

**[illegible] Пирĕн Совет халăхĕ [illegible]**

**ыйтнисене тивĕçтерес тесе тÿрĕ кăмăлпа тата хăйсен пурнăçне шеллемесĕр ĕçлеççĕ.**

**Хĕрлĕ Çар хăйĕн çинче гитлерла Германие тата унпа пĕр каварлисене хирĕç пыракан вăрçăн пĕтĕм йывăрлăхне тÿссе ирттерет. Фашистла çарсене хирĕç хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр кĕрешнине пула, Хĕрлĕ Çара тĕнчери ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсем юратаççĕ тата кăмăллаççĕ. Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсен ĕлĕкрех вăрçă вăрçас тĕлĕшпе çителĕклĕ опыт пулман, халĕ вĕсем тăшмана шанчăклăн пырса çапма, унăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе пыма, тăшманăн ĕмĕчĕсене путлантарса лартма, пирĕн хуласемпе ялсене ютçĕршывран килнĕ пусмăрçăсенчен çирĕппĕн хÿтĕлесе тăма вĕренсе çитрĕç. Мускавпа Тула хулине, Одессăпа Севастополе, Ленинградпа Сталинграда паттăррăн хÿтĕлекенсем вĕçĕ-хĕррисĕр хăюлăхăн, тимĕр пек çирĕп дисциплинăн, çирĕплĕхĕн тата çĕнтерме пĕлнин лайăх тĕслĕхĕсене кăтартса пачĕç. Пирĕн пĕтĕм Хĕрлĕ Çар çав геройсенчен пример илет. Хĕрлĕ Çар хирĕç тăма пултарнине тăшман хăйĕн тирĕпе тÿссе курчĕ ĕнтĕ. Хĕрлĕ Çар аркатмаллах пырса çапнин вăйне те вăл тÿссе курĕ-ха. Нимĕн иккĕленмелли те çук, нимĕç захватчикĕсем çĕнĕ авантюрăсем тума хăтланса пăхĕç. Анчах тăшманăн вăйне хавшатнă ĕнтĕ, [illegible] Хĕрлĕ Çар [illegible] тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 8 миллион çынна вилтерсе стройран кăларчĕ. Халĕ гитлерла çар, румынсене, венгерсене, итальянецсене, финсене илсе хутшăннăскер, 1941 çулта çулла тата кĕркунне пулнинчен чылай вăйсăрланчĕ.**

**Юлташсем — красноармеецсем, командирсемпе политработниксем, партизансемпе партизанкăсем!**

**Эсир çирĕп те [illegible] Совет çĕрне гитлерла захватчиксенчен тасатасси килсе тăрать.**

**ЭПИР СОВЕТ ÇĔРНЕ ГИТЛЕРЛА ИРСĔРСЕНЧЕН ТАСАТМА ПУЛТАРАТПĂР ТАТА ТАСАТМА ТИВĔÇ ТЕ.**

**Çавна тума акă мĕн кирлĕ:**

**1) [illegible]**

**2) Тимĕр пек çирĕп дисциплинăна, [illegible]**

**3) [illegible] пĕтермелле.**

**Юлташсем!**

**Хĕрлĕ Çар пырса çапнисен вăйне тăшман Ростов патĕнче, Мускав патĕнче, Тихвин патĕнче пĕрре тÿссе курчĕ ĕнтĕ. [illegible] Пирĕн урамра та праздник пулатех!**

**Сывă пултăр Октябрьти Социализмлă Аслă Революци XXV çул тултарни сывă пултăр!**

**Сывă пултăр пирĕн Хĕрлĕ Çар!**

**Сывă пултăр пирĕн Тинĕс-Çар Флочĕ!**

**Сывă пулчăр пирĕн мухтавлă партизансемпе партизанкăсем!**

**Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене—вилĕм!**

*Оборона Халăх Комиссарĕ И. СТАЛИН*

## Шупашкарти чаплă лару

Ноябрĕн 6-мĕшĕнче каçхине Советсен суртĕнчи ларусен залĕнче Октябрьти Социализмлă Аслă революци XXV çул тултарнă ятпа Шупашкар хулинчи [illegible] чаплă ларăвĕ пулса иртрĕ. Ларăвăн президиумне ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕсене Чарыков, Белков, Ахазов, Андреев юлташсене, Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев юлташа, ЦК ВКП(б) [illegible] Чăваш республикинчи Уполномоченнăйĕ Серов юлташа, Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарне [illegible] юлташа, ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕсене Романова юлташа, хула Совечĕн председателĕ Климов юлташа, [illegible] çар чаçĕсен представителĕсене тата хулари предприятисенчи стахановецсене суйларĕç.

Пурте пĕр кăмăллă пулса тата тăвăллăн алă çупса ларăвăн хисеплĕ президиумне Сталин юлташа пуçлăхлă ВКП(б) ЦК Политбюро составне суйларĕç.

Октябрьти Социализмлă Аслă революци XXV çул тултарни çинчен ВКП(б) Обкомĕн тата Горкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ доклад туса пачĕ. [illegible]

Ларура пулнисем [illegible] Оборона Государственнăй Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ патне саламлă çыру [illegible]

Чаплă лару хыççăн концерт пулчĕ.

## Ĕççынни Депутачĕсен Мускав Совечĕн Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнине уявлас шутпа тунă чаплă ларăвĕ

Ноябрĕн 6-мĕшĕнче каçхине, Мускаври Кремльре, СССР Верховный Совечĕн лару залĕнче, ĕççынни депутачĕсен Мускав Совечĕн парти тата общество организацийĕсемпе, стахановецсемпе, ударниксемпе тата совет интеллигенцийĕпе пĕрле тунă чаплă ларăвĕ пулса иртнĕ, ăна Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнине уявлама пухнă.

Кремльри дворецăн аслă та çутă залне çынсем лару пуçланиччен нумай малтан пырса тулнă. Пухура 3 пин çынна яхăн пулнă.

Каçхине 7 сехетре пуху президиумĕ ларакан вырăна Сталин юлташ тата партипе правительствăн руководителĕсем пырса тăраççĕ. Пĕтĕм зал вĕсене ура çине тăрса, нумайччен алă çупса хĕрÿллĕн саламлать. Тĕрлĕ çĕртен «Сывă пултăр пирĕн çулпуç аслă Сталин!», «Аслă Сталина урра!» тенисем илтĕнеççĕ.

Тăвăллăн алă çупса тăни нумайччен лăпланмасть. Çапла алă çупнинче—совет халăхĕ хăйĕн юратнă çулпуçне, хăватлă социализмлă индустриллĕ тата колхозлă державăна тăвакан аслă çынна, Хĕрлĕ Çарăн полководецне, Совет государствине хÿтĕлессине организацилекене тата ертсе пыракана пĕтĕм чĕререн юратни туллин палăрса тăрать. Темиçе пин çын трибуна çине, хăйĕн юлташĕсем хушшинче тăракан Сталин юлташ çине куç илмесĕр темиçе минута хушши пăхса тăраççĕ. Халăх Сталин юлташа саламлать. Сталин юлташ алă çупса ответлет, алă çупса—Мускав представителĕсене, темиçе миллионлă йышлă нациллĕ Совет Союзне, паттăр Хĕрлĕ Çара, паттăр Тинĕс-Çар флотне саламлать.

Президиума Сталин, Молотов, Ворошилов, Калинин, Андреев, Микоян, Берия, Шверник, Маленков, Щербаков, Вознесенский, Пронин, Попов, Черноусов юлташсем ларчĕç. Ложăсенче—ЦК ВКП(б) членĕсем, СССР Верховный Совечĕн Президиумĕн членĕсем, наркомсем, Мускаври парти тата совет организацийĕсен руководителĕсем. Ĕççынни депутачĕсен Мускав Совечĕн исполкомĕн председателĕ Пронин юлташ чаплă ларăва уçни çинчен пĕлтерет.

ВКП(б) Мускав хули комитечĕн секретарĕ Попов юлташ сĕннипе хисеплĕ президиум суйлаççĕ.

— Сталин юлташ...!

Тăвăллăн алă çупни залăн стенисене кисрентерсе ярать. Пурте ура çине тăраççĕ. «Сывă пултăр Сталин юлташ!» тенĕ сасă янăраса каять, ăна пĕтĕм зал хапăлласа йышăнать.

Молотов, Ворошилов, Каганович, Калинин, Андреев, Микоян, Жданов, Хрущев, Берия, Шверник, Маленков, Щербаков, Вознесенский юлташсен ячĕсене зал хĕрÿллĕн алă çупса кĕтсе илет.

Пронин юлташ пĕлтерет:

— Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарни çинчен доклад тума Оборонăн Государственный Комитечĕн Председательне Сталин юлташа сăмах паратăп, тет.

Сталин юлташ трибуна патнелле утать, ăна пĕтĕм зал тăвăллăн алă çупса саламлать. Зал нумайччен тата хĕрÿллĕн алă çупать. Пухури çынсем çулпуçне ура çинче тăрса саламлаççĕ.

Сталин юлташ доклад тума тытăнать. Пĕтĕм зал шăп пулса тăрать. Сталин юлташăн кашни сăмахĕ лăпкăн, çирĕппĕн, шанчăклăн янăрать. Вăл сăмахсем пĕлтĕрхи тĕп событисене тарăнăн анализ туса параççĕ тата пирĕн малашнехи çапăçупа çĕнтерĕвĕн аслă пуласлăхне кăтартса параççĕ.

Сталин юлташ хăйĕн уçăмлă докладне Хĕрлĕ Çара, Тинĕс-Çар Флотне тата партизансемпе партизанкăсене мухтав сăмахĕ каланипе вĕçлет.

Сталин юлташăн доклачĕпе хавхаланса, пĕтĕм зал пĕр туртăмпа ура çине тăрать. Çĕнĕрен тăвăллăн алă çупни тата саламлă сăмахсем калани кĕрлесе каять. Пухури мĕнпур çынсем çав тери çĕкленсе каяççĕ. Вĕсем эпир çĕнтерессине хытă ĕненсе тăраççĕ.

ВКП(б) Мускав хули комитечĕн секретарĕ Сталин юлташ саламласа çырнă çырăва вуласа парсассăн, зал çулпуçне тепĕр хут çавăн пекех вăйлăн алă çупса саламлать.

Пронин юлташ чаплă ларăва хупни çинчен пĕлтерет. Пухури çынсем Сталин юлташа тата унăн соратникĕсене нумайччен алă çупса ăсатса яраççĕ.

## Октябрьти Социализмлă Аслă революци XXV çул тултарнине республикăра уявлани

**ШУПАШКАРТА.**

Ноябрĕн 7-мĕшĕ—хĕвеллĕ, анчах хĕллехи пек сивĕ кун. Республика столицин Хĕрлĕ площадьне хулари предприятисен, учрежденисен тата çар чаçĕсен колоннисем пухăнаççĕ. Колоннăсем çинче лозунгсем, хĕрлĕ ялавсем, партипе правительство руководителĕсен сăнĕсем, фашистла ирсĕрсене питлекен карикатурăсем.

Вуннпĕр сехет. Советла революци пулнăранпа 25 çул тултарнă ятпа пухăннă хулари ĕççыннисен темиçе пинлĕ митингне ВКП(б) Шупашкар Горкомĕн секретарĕ Романова юлташ уçать. Парти Обкомĕпе Чăваш правительствин ячĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев юлташ саламлă сăмах калать.

— Чĕрĕк ĕмĕр хушшинче,—тет Матвеев юлташ,—ССР Союзĕ вăйлă индустриллĕ тата колхозсемлĕ держава пулса тăчĕ. Этемлĕхĕн усал тăшманĕ—нимĕç фашизмĕ—эпир 25 çул хушшинче тунă пурнăçа пĕтересшĕн, пирĕн ирĕклĕхе туртса илесшĕн, пире нимĕç империалисчĕсемпе баронĕсен чурисем туса хурасшăн. Вĕсен çакăн пек ирсĕр ĕмĕчĕсем пурнăçа ан кĕччĕр тесен, пирĕн, тыл çыннисен, татах та тимлĕнрех, татах та тухăçлăнрах ĕçлес пулать.

Матвеев юлташ митингра пулнă ĕççыннисене тăван Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота мĕнпур вăйран пулăшма чĕнет: «Йăлтах—фронт валли, йăлтах—çĕнтерÿ тума!».

Митингра пулнисене хулари çар чаçĕсенчен—Баркан юлташ, Н-ски заводран — цех начальникĕ Буйволов юлташсем саламларĕç.

— Н-ски завод коллективĕ уйăхран уйăха плана ăнăçлăн тултарса ĕçлет, Хĕрлĕ Çарпа халăх хуçалăхне мĕн парăма пултарнине пурне те пама тăрăшать. Тăшмана тăван çĕршывран хăвăртрах хăваласа кăларса аркатса тăкас тесе, пирĕн рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем ку таринччĕнхинчен темиçе хут тухăçлăрах ĕçлеме пулаççĕ,—тет Буйволов юлташ.

Митингра пулнă рабочисемпе служащисем, Хĕрлĕ Çар командирĕсемпе боецĕсем Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ, Оборона Халăх Комиссарĕ И. В. Сталин юлташ патне саламлă çыру ячĕç.

**КАНАШРА.**

Ноябрĕн 6-мĕшĕнче каçхине, железнодорожниксен клубĕнче, Совет влаçĕ XXV çул тултарнă ятпа Канаш хула Совечĕн тата партипе обществăллă организацисен чаплă ларăвĕ пулса иртнĕ. ВКП(б) Горкомĕн секретарĕ Никитин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă революци XXV çул тултарни çинчен доклад туса панă. Чаплă ларура пулнисем халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ патне, Сталинграда паттăррăн хÿтĕлекенсем патне саламлă çыру янă.

Ноябрĕн 7-мĕшĕнче кăнтăрла хулари ĕççыннисен митингĕ пулса иртнĕ. Митингра пулнисене хулари партипе совет организацийĕсен ячĕпе ВКП(б) Канаш хула Комитечĕн секретарĕ Лисин юлташ, комсомолецсемпе çамрăксен ячĕпе ВЛКСМ хула комитечĕн секретарĕ Напрасный юлташ тата рабочисемпе инженерла-техникла работниксен ячĕпе Канашри вагонсем юсакан заводри партбюро секретарĕ Сорокин юлташ саламланă.

**ÇĔМĔРЛЕРЕ.**

Çамрăк хулан урамĕсем уяв тумĕпе тумланнă. 11 сехет тĕлне хулан Хĕрлĕ площадьне ĕççыннисен колоннисем пухăнма пуçларĕç. Пролетариллĕ революци 25 çул тултарнă ятпа Çĕмĕрлери ĕççыннисен митингĕ пулса иртрĕ.

Комбинатри рабочисемпе служащисен тата производство командирĕсен ячĕпе стахановец Дмитриев юлташ саламларĕ:

— Çĕршыв умне хăрушлăх тухса тăчĕ,—тет вăл. —Çынçиен Гитлер пирĕн çĕре туртса илсе, пире хăйĕн чури тăвасшăн. Анчах вăл нихăçан та пулмĕ. Мĕншĕн тесен Хĕрлĕ Çарпа пĕрле тăрса мĕнпур совет халăхĕ кĕрешет. Пирĕн задача—çак кĕрешĕве хамăрăн мĕнпур вăя парасси. Эпĕ ĕçри нормăна 2—3 хут ирттерсе тултаратăп.

Митингра тата ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Григорьев, ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Анисимов, пионерка Милорадовская юлташсем тухса каларĕç.

**ÇĔРПУРЕ.**

Ноябрĕн 7-мĕшĕнче пулса иртнĕ митингра 6 пин çын пулнă. Саламлă сăмахсем Çĕрпÿ райсовет исполком председателĕ Хабаров, Азол тата Гутмин юлташсем тухса каланă.

* * *

Çавăн пекех Октябрьти революци XXV çул тултарнă ятпа нумай çынлă митингсем Етĕрнере, Куславккара, Сĕнтĕрвăрринче, Йĕпреçре тата ытти район центрĕсенче те пулса иртнĕ.

## ССР Союзĕн Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссарĕн Приказĕ

### 1942 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕ. Мускав хули

### № 311

**Юлташсем — краснофлотецсемпе командирсем!**

Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнă уява пирĕн çĕршыв нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан хаяр вăрçă условийĕсенче кĕтсе илет.

Пирĕн тăван çĕршывăн территорийĕнче вунçиччĕмĕш уйăх ĕнтĕ юнлă çапăçусем пыраççĕ. Çав çапăçусенче Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ совет халăхĕн ирĕклĕхне, пирĕн государствăн чыслăхĕпе никама пăхăнманлăхне паттăррăн хÿтĕлесе пыраççĕ. Октябрьти аслă çĕнтерÿсен кунçулĕ пирки, этемлĕх малалла аталанассин кунçулĕ пирки ыйту татăлать.

Октябрьти Социализмлă Аслă революци пирĕн çĕршывра империалистсен влаçне сирпĕтсе ячĕ, пирĕн çĕршыва чечекленсе ÿсмелли шанчăклă çул çине илсе тухрĕ. Совет влаçĕ вăхăтĕнче пирĕн çĕршыври халăхсем Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе пирĕн çĕршывра паразитла классене пĕтерсе хучĕç, социализмлă индустриллĕ тата колхозлă хăватлă держава туса хучĕç, пирĕн çĕршывран ĕмĕрхи тĕттĕмлĕхе, ÿсмесĕр пăчланса тăнине, чухăнлăха, хур тунине хăваласа кăларчĕç. Çак революциллĕ аслă çĕнетÿсем пирĕн çĕршыва нимĕçсен çар машини хĕснине чăтса тăма, гитлерла çара урăх тÿрленмелле мар пыра-пыра çапма тата нимĕç захватчикĕсене çил-тăвăллăн аркатса тăкмашкăн вăйсем пухма пултаракан туса хучĕç.

Отечественнăй вăрçăн питĕ пысăк фрончĕн флангĕсенче, Баренц тинĕсĕпе Хура тинĕсре, Балтикăпа Атăл çинче, Ленинграда, Севастополе, Сталинграда хÿтĕленĕ çĕрте совет морякĕсем Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсемпе алла-аллăн тытăнса кĕрешсе тăшмана питех те вăйлăн пыра-пыра çапнă, халĕ те çавăн пекех пыра-пыра çапаççĕ, унăн чĕрĕ вăйĕпе техникине çĕмĕрсе-ватса пыраççĕ.

Харсăр краснофлотецсемпе командирсем, хăюллă подводниксем, пирĕн флотăн хастарлă летчикĕсем фашистсен çĕршер транспорчĕпе карапне путарнă. Пирĕн çыранри оборонăн чаплă артиллерисчĕсем куллен тăшманăн сахал мар чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе пыраççĕ.

Тинĕс морякĕсем паттăр вырăс флочĕн чи лайăх традицийĕсене çĕнĕрен чĕртсе ярса ÿстерсе ячĕç. Краснофлотецсемпе командирсен паттăр ĕçĕсем, вĕсем нимĕнрен хăраманни тата вĕсен хастарлăхĕ, вĕсен харсăрлăхĕ тата вĕсем çухалса кайманни, вĕсем тăшмана çав тери хытă кураймани тата лартнă тĕллеве пурнăçа кĕртесшĕн çунса тăни ĕмĕрлĕхе халăхăн асăнче юлĕç.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан хаяр çапăçусенче карапсен гвардейски экипажĕсем, авиацин гвардейски полкĕсем тата тинĕс пехотин мухтавлă чаçĕсем çуралса ÿсрĕç тата пиçĕхсе çитрĕç.

Тĕнчери ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсем Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн хастарлăхĕпе, совет халăхĕн, тискерленсе кайнă фашистла кĕтÿсемпе кĕрешес ĕçĕн пĕтĕм йывăрлăхне хăй çинче тÿссе ирттерекен совет халăхĕн паттăрлăхĕпе савăнса хĕпĕртеççĕ.

Юлташсем — краснофлотецсемпе командирсем!

Эсир усал та халлĕхе вăйлă тăшманпа кĕрешетпĕр. Фашистсем Атăл патнелле талпăнаççĕ, Сталинграда тытса илесшĕн, хăйсен вăйĕсене кăнтăралла яраççĕ, пирĕн тинĕс çинчи чи кирлĕ базăсене тытса илме хăтланаççĕ. Пирĕн тăван çĕршыв умне килсе тухнă хăрушлăх пысăк.

Анчах та тăшман мĕн тери тăрăшсан та, вăл малалла мĕн тери хытă талпăнсан та, ăна эпир çĕнтеретпĕр, çĕнтерÿ пирĕн алăра пулать.

Совет халăхĕн гитлерла войскăсене тытса чарма, вĕсене каялла хăваласа яма тата аркатса тăкма пур майсем те пур. Пирĕн темиçе миллионлă Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ пур, вĕсем чи лайăх йышши çар техникипе хĕçпăшалланнă, вĕсем çапăçу опычĕ нумай пухнă. Гитлерла çарсен тылĕнче, тăшман вăхăтлăха тытса илнĕ территорире пĕтĕм халăхăн партизанла движенийĕ сарăлса пырать, вăл нимĕçсемпе кĕрешес ĕçре хăрушă вăй пулса тăрать. Пирĕн хăватлă социализмлă промышленность тата социализмлă ялхуçалăхĕ Хĕрлĕ Çарпа Флота мĕн кирлине пурне те парса тăраççĕ. Большевиксен партийĕ тавра пĕтĕçнĕ совет халăхĕ хăйĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварма пĕтĕм вăйпа тăрăшать. Совет халăхĕ пуçĕнче халăх вĕçĕмсĕр шанса тăракан правительство тăрать. Пире çĕнтерÿ патне халăхăн çулпуçĕ Сталин юлташ ертсе пырать. Тăшмана çĕнтересси халĕ эпир тимлĕн кĕрешнинчен, çар техникипе туллин усă курма пĕлнинчен, эпир çирĕп те дисциплинăллă пулнинчен килет.

Пирĕн задача—нимĕçсене пĕр чарăнмасăр çапасси, тăшманăн карапĕсемпе транспорчĕсене путарса пырасси, нимĕçсен танкĕсене, орудийĕсене тата пулемечĕсене, унăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе пырасси пулса тăрать.

Нимĕç пусмăрлăхĕнче асапланса пурăнакан пирĕн пиччесемпе аппасем хăйсене ирĕке кăларакансене—Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне—кĕтсе тăраççĕ.

Краснофлотец юлташсем! Совет çĕрĕн кашни пусăмне çирĕппĕн хÿтĕлĕр! Хăвăр алăри хĕçпăшала вĕренĕр, ăна питĕ ăста пĕлĕр! Тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе пырăр! Совет çĕрĕпе совет шывĕсене нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен тасатăр!

Командир юлташсем! Карапсен, чаçсен тата соединенисен уставĕсене пĕлнине пĕр чарăнмасăр ÿстерсе пырăр! Дисциплинăпа единоначалие çирĕплетсе пырăр, карапсемпе чаçсем пĕрпĕринпе çыхăнса кĕрешес ĕçе питĕ тĕплĕн вĕренĕр, хăвăр ĕçĕн мастерĕсем пулса тăрăр.

Тăшмана хытăрах пыра-пыра çапăр!

Юлташсем — краснофлотецсемпе командирсем, эпĕ сире Аслă Октябрь 25 çул тултарнă ятпа салам калатăп.

Сывă пултăр Октябрьти Социализмлă Аслă революци, пирĕн çĕршывра империалистсен влаçне сирпĕтсе янă, пĕтĕм тĕнчери халăхсем хушшинче мир пулмалла тесе пĕлтернĕ революци!

Сывă пултăр Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ!

Сывă пултăр пирĕн мухтавлă Тăван çĕршыв, унăн ирĕклĕхĕ тата никама пăхăнманлăхĕ!

Сывă пултăр Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕ, Ленин—Сталин партийĕ,—нимĕçсен фашистла захватчикĕсене çĕнтерессишĕн пыракан кĕрешĕве организацилекен парти!

Сывă пултăр пирĕн боевой çулпуç Сталин юлташ!

**ССР Союзĕн Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссарĕ — адмирал**
**Н. КУЗНЕЦОВ.**

## Великобританин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ г. Антони Иден Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне В. М. Молотова янă телеграмма

Сире эпĕ советсен наци уявĕ 25 çул тултарнă май Великобританин правительстви ячĕпе тата хам ятпа совет халăхне салам калама ыйтатăп.

Ку уяв Германин агрессийĕ Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне хирĕç пуçланă вăрçăн 17-мĕш уйăхĕпе пĕр вăхăтра пулса иртет.

Совет халăхĕ 17 уйăх хушши ĕнтĕ Гитлерпа унăн хÿрешкисем хаяррăн тапăннине тата вĕсен тискерлĕхĕсене питĕ чаплăн хирĕç тăрать. Советсен хĕçпăшаллă вăйĕсемпе партизансен чаплă ĕçĕсем, гражданла совет халăхĕн хăйĕн тăван çĕршывне хÿтĕлемешкĕн тăвакан ĕçĕсем тата вăл тÿсекен асапсем историе ĕмĕрлĕхе кĕрсе юлчĕç. Эпир совет халăхпе пĕрле 20 çуллăха союзниксем пулса тăтăмăр.

Эпир çав союзăн шухăшĕ тăрăх ĕçлетпĕр тата кĕрешетпĕр, эпир пĕрлешнĕ нацисем тискер тăшмана вăл чуралантарнă пур территорисенчен те хăваласа кăларас куна, тунă тискерлĕхсемшĕн айăплă пулса тăракан çынсене наказани парас куна çывхартассишĕн кĕрешетпĕр, пĕрлешнĕ нацисем вара хăйсен юлташла çыхăнăвĕсене тата пĕрпĕрне ăнланнине (çаксене вĕсем вăрçăн хаяр шкулĕнче вĕренсе çитрĕç) реконструкци тăвас ĕçе хывĕç.

**ИДЕН.**

## Польша республикин президенчĕ г. Рачкевич СССР Верховный Совечĕн Президиумĕн Председательне М. И. Калинина янă телеграмма

Наци уявĕ кунĕнче тата Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ 25 çул тултарнине уявланă кун эпĕ Сире, Господин председатель, Сирĕн çĕршыва телейлĕ пуласлăх хĕрÿллĕн сунниие çавăн пекех тата паттăр совет армийĕсене пирĕн пĕрлехи тăшмана хирĕç пыракан кĕрешÿре çĕнтерÿ суннине йышăнма ыйтатăп.

**Владислав Рачкевич.**

# Совет Информаци Бюровӗнчен

## Ноябрӗн 8-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Ноябрӗн 8-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем противникпа Сталинград районӗнче, Туапсеран ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата Нальчикран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре ҫапӑҫнӑ. Ытти фронтсенче нимӗнле улшӑну та пулман.

Иртнӗ эрнере, ноябрӗн 1-мӗшӗпе 7-мӗшӗ хушшинче, сывлӑшри ҫапӑҫусенче, аэродромсем ҫинче тата зенитнӑй артиллери пенипе нимӗҫсен 158 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫав вӑхӑт хушшинчех пирӗн 63 самолет пӗтнӗ.

Балтика тинӗсӗнче пирӗн карапсем нимӗҫсен пӗтӗмпе 12.000 тонна водоизмещениллӗ 2 транспортне путарнӑ.

* * *

Ноябрӗн 7-мӗшӗнче пирӗн авиаци фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен боеприпассем турттарса пыракан 20 автомашинине тата 15 лавне, горючи тултарнӑ 10 автоцистернине пӗтерсе тӑкнӑ, боеприпассен 2 складне тата горючин 2 складне сирпӗнтерсе янӑ, артиллерин 12 батарейине пусарса лартнӑ, противникӑн пехотине пӗр ротӑна ҫити сапаласа янӑ, пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинград районӗнче пирӗн войскӑсем противникӑн пӗчӗк ушкӑнӗсен атакисене сирсе тӑнӑ тата хӑйсен оборона укрепленийӗсене лайӑхлатнӑ. Нимӗҫ пехотин пӗр роти пирӗн пӗр питех те кирлӗ ҫар объекчӗ патне кӗрсе кайнӑ. Андреев лейтенантпа 8 боец гитлеровецсене фланграан пырса ҫапнӑ та каялла хӑваласа янӑ. Ҫав ҫапӑҫура красноармеец Козлов юлташ 15 нимӗҫе вӗлернӗ. Старшина Жедовин юлташ тӑшманӑн пулеметне тытса илнӗ те ҫав пулеметпа персе 20 гитлеровеца вӗлернӗ. Старши сержант Щепов юлташ 19 гитлеровеца вӗлернӗ, старшина Иванов юлташ тата сержант Киселев юлташ 12-шер нимӗҫе вӗлернӗ. Хула оборонин участокӗсенче пӗтӗмпе нимӗҫсен 500 салтакӗпе офицерне ҫити вӗлернӗ, 8 оруди, 13 пулемет тата 7 миномет пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн летчиксем противникӑн 4 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Нальчикран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн чӑссем активлӑн ҫапӑҫнӑ, гитлеровецсене чылаях пысӑк ҫухатусем кӳнӗ.

Кавалерин Н-ски гвардейски чӑҫӗ кӗрешекен участокра гвардеец-казаксем икӗ кун хушшинче тӑшманӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 1.700 ҫынна ҫити вӗлерсе пӗтернӗ, 27 танк, 39 бронемашина, 69 автомашина персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ, 12 миномет, 32 пулемет, 12 оруди тата 3 тягач прицепсемпе пӗрле пӗтерсе тӑкнӑ. Тумтир склачӗ, радиостанци тата ытти ҫар пурлӑхӗ нумай тытса илнӗ.

Пирӗн летчиксем сывлӑшри ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 6 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Туапсеран ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре противник темиҫе контратака тунӑ. Нимӗҫсен ҫав атакисене пурне те сирсе янӑ, тӑшмана пысӑк ҫухатусем кӳнӗ. Тепӗр участокра нимӗҫсен пехоти, танксемпе авиаци пулӑшнипе, халӑх пурӑнакан пӗр пункта йышӑнса илнӗ. Пирӗн чӑссем, контратака туса, противника халӑх пурӑнакан ҫав пунктран каялла хӑваласа кӑларнӑ, вара положени малтанхи пекех пулса юлнӑ. Гитлеровецсем ҫав ҫапӑҫура хӑйсен пехотине пӗр ротӑна ҫити ҫухатнӑ.

* * *

Белоруссире, Смоленск тата Орел облаҫӗсенче кӗрешекен партизансем противникӑн ҫулйӗрӗсене тапӑнса чылаях пысӑк сиенсем кӳнӗ. Ноябрӗн 1—2—3-мӗшӗнче партизансен отрячӗсем нимӗҫсен чугунҫул тӑрӑх пыракан 39 эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ. 28 паровоз тата 536 вагон, платформӑпа цистерна ҫӗмӗрнӗ. Чугунҫулсем ҫинчи крушенисенче тата партизансен ҫав вӑхӑтри тапӑнӑвӗсенче нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене темиҫе пин ҫынна пӗтернӗ.

* * *

Оборона Халӑх Комиссарӗн Сталин юлташӑн Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци XXV ҫул тултарни ҫинчен тунӑ доклачӗпе приказӗ Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар Флотӗн чӑҫӗсенче питех те пысӑк патриотизмла ҫӗкленӳ турӗ. Фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче, фронт ҫывӑхӗнчи тата тылри гарнизонсенче Хӗрлӗ Ҫар боецӗсен, командирӗсен тата политработникӗсен массӑллӑ митингӗсем пулса иртнӗ.

Ленинград фрончӗн Н-ски чаҫӗнчи красноармеец Егоров юлташ ҫапла каланӑ: «Сталин юлташӑн кашни сӑмахӗ совет ҫыннине тӑван ҫӗршыв чапӗшӗн паттӑрла ҫапӑҫма хавхалантарать. Сталин юлташ ҫапла каланӑ: гитлерла государствӑна, гитлерла ҫара тата фашистсен «Европӑри ҫӗнӗ йӗркине» пирӗн пӗтерсе тӑкмалла, тенӗ. Сталин юлташ мӗнле каланӑ, ҫавӑн пек пулать».

Кронштадтри гарнизонра пулса иртнӗ митингра красноармеец-казах Амердинов юлташ, праздник умӗн виҫӗ гитлеровеца вӗлернӗскер, сӑмах тухса каланӑ. Вӑл ҫапла каланӑ: «Гитлерла йытӑкӗтӗвӗсене хирӗҫ пыракан ҫапӑҫусенче пирӗн ҫӗршыври халӑхсен туслӑхӗ татах та вӑйлӑрах ҫирӗпленчӗ. Вырӑссемпе казахсем, украинецсемпе грузинсем, армянсемпе белоруссем—эпир пурте хамӑрӑн юратнӑ ҫӗршыва хӳтӗлетпӗр. Эпӗ Ленинграда та, Кронштадта та хамӑн тӑван Казахстана юратнӑ пекех юрататӑп. Тӑшмана тӗппипе пӗтерсе тӑкиччен ҫапӑҫма тупа тӑватӑп»,—тенӗ.

Калинин фрончӗн участокӗсенчен пӗринче пулса иртнӗ митингра красноармеец-узбек Усманов юлташ хӗрӳллӗ сӑмах тухса каланӑ. «Эпир,—тенӗ вӑл,—Сталин юлташӑн приказне чыслӑн пурнӑҫа кӗртме пулса тупа тӑватпӑр. Эпир совет ҫӗршывне гитлерла йӗрӗнчӗксенчен тасататпӑр, нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсене пӗтерсе тӑкӑпӑр. Пирӗн урамра та праздник пулас кун инҫе мар».

Сталин юлташӑн доклачӗпе тата приказӗпе паллашнӑ хыҫҫӑн нумай чаҫсенчи боецсемпе командирсем нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене чылай пӗтерсе тӑкнӑ. Ленинград фронтӗнче ноябрӗн 7-мӗшӗнче пӗр дивизи участокӗнче кӑна снайперсем 113 гитлеровеца вӗлернӗ, Калинин фронтӗнче — 132, Брянск фронтӗнче — 240 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ, Хӗвеланӑҫ фронтӗнче снайперсем нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 350 ҫынна пӗтерсе тӑкнӑ.

## Ноябрӗн 9-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Ноябрӗн 9-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинград** районӗнче, **Туапсеран** ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата **Нальчикран** кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре ҫапӑҫнӑ.

Ытти фронтсенче нимӗнле улшӑну та пулман.

* * *

Сталинград районӗнче противникӑн вак ушкӑнӗсемпе ҫапӑҫнӑ. Хулан заводсем ларакан пайӗнче пирӗн боецсем гитлеровецсен атакине сирсе янӑ, нимӗҫсен пехотине пӗр рота таран пӗтерсе тӑкнӑ. Сталинграда хӳтӗлекенсем тӑшмана хирӗҫ хӑйсен пурнӑҫне шеллемесӗр кӗрешеҫҫӗ. Пӗр участокра противник пирӗн подразделение атакӑлама хӑтланнӑ. Гвардеецсем Холодюк, Мотин тата Усачев юлташсем тӗл персе тӑшманӑн пехотине чарса тӑнӑ, ӑна малалла куҫма паман. Нимӗҫсем гвардеецсене хирӗҫ 6 танк янӑ. Пирӗн виҫӗ боец гранатӑсен ҫыххисемпе тата ҫунакан шӗвек тултарнӑ бутылкӑсем ывӑтса противникӑн пур 6 танкне те ҫунтарса янӑ.

* * *

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн чӑссем противникпа пӗрпӗрин ҫине персе тӑнӑ. Пӗр участокра пирӗн боецсем минометсемпе персе тӑшманӑн пехотин икӗ взводне ытла сапаласа янӑ, пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра Лиленков юлташ ертсе пыракан артиллеристсем 8 дзотпа блиндажа ҫӗмӗрнӗ тата противникӑн 4 пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ. Вахрамеев юлташ командир пулса тӑракан чаҫри снайперсем нимӗҫсен 189 салтакӗпе офицерне вӗлернӗ.

* * *

Нальчикран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре Филиппов юлташ ертсе пыракан танкистсем противникӑн темиҫе атакине сирсе янӑ. Ҫав участокра виҫӗ кун хушши ҫапӑҫса тӑшманӑн пехотине пӗр батальона ҫити пӗтерсе тӑкнӑ тата нимӗҫсен юсавлӑ темиҫе танкне тытса илнӗ. Рябков юлташ ертсе пыракан гвардеец-артиллеристсем противникӑн 4 танкне персе ҫӗмӗрнӗ тата зенитнӑй батарейине пусарса лартнӑ.

* * *

Брянск фронтӗнче пирӗн артиллерипе снайперсем юлашки 5 кун хушшинче 670 нимӗҫ салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Летчик-штурмовиксем противникӑн аэродромне сасартӑк тапӑннӑ. Противник вӑйлӑн персе пӳлсе тӑнӑ пулин те, совет летчикӗсем тӗллев патне вӗҫсе тухнӑ та нимӗҫсен 20 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ.

* * *

Краснодар крайӗнчи районсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен отрячӗ тыткӑна лекнӗ красноармеецсене хӑтараласа пыракан нимӗҫ конвойне засадӑран тухса тапӑннӑ. Партизансем гитлеровецсене персе вӗлернӗ те тыткӑна лекнӗ красноармеецсене пурне те ирӗке кӑларнӑ.

Украинӑри партизансен отрячӗ пысӑк чугунҫул станцине тапӑннӑ. Партизансем чугунҫул кӗперне тата водокачкӑна сирпӗнтерсе янӑ, ҫар грузӗсем хунӑ складсене ҫунтарса янӑ.

* * *

Орел облаҫӗнчи Зелепуговка поселокӗнче нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсем 260 ҫурта ҫӗмӗрсе, ҫунтарса пӗтернӗ. Гитлерла бандитсем ҫав поселокри 10 колхознике чӗрӗллех ҫунтарса янӑ.

* * *

Югослави партизанӗсен отрячӗсем, Грачацы хули патӗнче кӗрешекенскерсем, противникӑн пехотнӑй полкне аркатса тӑкнӑ. Ҫав полкӑн штабне тыткӑна илнӗ. Карловац хулинчен инҫех мар вырӑнта партизансем оккупантсене пӗр ҫирӗплетнӗ пунктран хӑваласа кӑларнӑ. Ҫав ҫапӑҫура итальянецсен 600 салтакпа офицер ытла вилнӗ е аманнӑ.

# Совет Союзӗн орденӗсемпе медалӗсене пани

Ноябрӗн 5-мӗшӗнче, Шупашкарти Советсен ҫуртӗн ларусен залӗнче, СССР Верховный Совет Президиумӗ хушнипе Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. А. Андреева юлташ фронтра паттӑррӑн ҫапӑҫакан командирсене тата тылра тӑрӑшса ӗҫлекен работниксене Совет Союзӗн орденӗсемпе медалӗсене пачӗ.

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫланӑшӑн тата хӑюлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн летчик-старшина П. А. Акуленок, лейтенант А. Т. Кухарев тата лейтенант А. З. Бондарчук юлташсем «Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр» орденӗсене илчӗҫ.

— Ҫак пысӑк наградӑшӑн эпӗ хамӑрӑн совет правительствипе большевиксен партине чӗререн тав тӑватӑп,—тет лейтенант Бондарчук юлташ, орден илнӗ ятпа сӑмах каласа.—Эпӗ халӗ, фронтран аманса килнӗ хыҫҫӑн, Канаш хулинче всевобучӑн старши инструкторӗ пулса ӗҫлетӗп. Хамӑн тылри ӗҫсене фронтри пекех вӑхӑтра тата тӗрӗс пурнӑҫлама пулатӑп.

Фронта пулӑшас тӗлӗшпе тылра ырми-канми ӗҫленӗшӗн, питех те кирлӗ ӗҫре Правительство заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫланӑшӑн Пӑрачкав районӗнчи уполнаркомзагӑн учетчици Т. Ф. Кучкасова юлташ «Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав» орденне илет.

Пысӑк наградӑна илсе, Кучкасова юлташ малашне татах та тимлӗнрех ӗҫлеме, хӑйӗн ӗҫне кӑтартуллӑ туса пыма сӑмах парать.

Совет Правительствин наградисене ҫавӑн пекех милицин кӗҫӗн лейтенанчӗсем И. И. Игнатьевпа В. И. Московкин юлташсем «Знак почета» орденӗ тата лейтенант Н. В. Прокопьев юлташ «За отвагу» медаль илчӗҫ.

Совет правительствин орденӗсемпе медалӗсене илнӗ юлташсем революциллӗ законлӑха ҫирӗплетме, социализмлӑ пурлӑха ҫирӗп сыхлама пулчӗҫ.

Юлашкинчен Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. А. Андреева юлташ Совет Союзӗн орденӗсемпе медалӗсене илнӗ юлташсене саламларӗ.

— Эсир, фронтри паттӑр та хӑюллӑ командирсем, тылри тӳрӗ кӑмӑллӑ работниксем,—тет З. А. Андреева юлташ,—юратнӑ тӑван ҫӗршыва нимӗҫ захватчикӗсенчен сыхласа хӑварас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем тунӑ. Сирӗн пек ҫынсене совет влаҫӗ мухтать, юратать, хӑйӗн орденӗсемпе медалӗсене парса наградӑлать. Пысӑк наградӑсене илме тивӗҫлӗ пулни сире малашне татах та тимлӗнрех ӗҫлеме хушать.

# Фронта пулӑшни

• Чӑваш республикинчи рабочисем, колхозниксем тата служащисем тӑван ҫӗршывӑн оборона фондне 24 миллион тенкӗ укҫа тата облигацисемпе хаклӑ япаласем чылай хывнӑ.

• Чӑваш ӗҫҫыннийӗсем перекетлесе хӑварнӑ укҫа-тенкӗпе отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ кунӗсенче икӗ бронепоезд тата «Осоавиахим Чувашии» ятлӑ самолетсен звенине туса фронта ӑсатнӑ. Халӗ ҫав боевой машинӑсем нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ кӗрешеҫҫӗ.

• Чӑваш республикинчи пионерсемпе шкул ачисем пухнӑ укҫапа «Пионер Чувашии» танк тунӑ.

• Елчӗк МТС коллективӗ пуҫарнипе республикӑри трактористсемпе комбайнерсем хушшинче танксен «Тракторист Чувашии» ятлӑ колоннине тума укҫа пухас ӗҫ пуҫланчӗ. Ноябрӗн 5-мӗш тӗлне ҫак ӗҫ валли республикӑра пурӗ 395 пин тенкӗ укҫа пухнӑ.

• Вӑрнар районӗнчи Кольцовкӑри Сталин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем пуҫарнипе танксен «Колхозник Чувашии» ятлӑ колоннине тумашкӑн ноябрӗн 5-мӗш тӗлне республикӑра пурӗ 478 пин тенкӗ укҫа пухнӑ.

• Пирӗн республикӑри ӗҫҫыннисем Действующи ҫарти боецсемпе командирсене Май уявӗ ячӗпе чылай парнесем ярса пачӗҫ. Октябрь уявӗ умӗнхи парнесене нумай пулмасть 15 вагон тиесе фронта ҫитернӗ.

# Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗнче

## Авӑн ҫапас тата государствӑна тырӑ парас ӗҫсене вӗҫлемелли ҫирӗмкунлӑх ирттересси ҫинчен

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ Первомайски, Чкаловски, Елчӗк, Тӑвай, Кувакино районӗсенче авӑн ҫапас тата государствӑна тырӑ парас ӗҫсем мӗнле пынине пӑхса тухрӗҫ. Ку районсенче ҫак ӗҫсене юлашки вӑхӑтра пачах ҫителӗксӗр туса пынине, ҫак ответлӑ ӗҫсене кунта чарса лартнине сивлерӗҫ.

Ӗҫ ҫакӑн пек чарӑнса тӑни вӑл— ку районсенчи райсовет исполкомӗсемпе ВКП(б) райкомӗсем авӑн ҫапас тата государствӑна тырӑ парас ӗҫсемпе интересленме пӑрахнинчен, ҫак питех те кирлӗ ӗҫсем хӑйсем тӗллӗн пулса пырасси ҫине шаннинчен килнӗ. Вӗсем авӑн ҫапмалли тата государствӑна тырӑ памалли пилӗккунлӑх заданисем мӗнле пурнӑҫланса пынине сӑнаса тӑмаҫҫӗ, вӑл заданисене пурнӑҫа кӗртес ӗҫе вӑйлатса пымаҫҫӗ.

Авӑн ҫапас, государствӑна тырӑ парса татас ӗҫсене хӑвӑртрах вӗҫлес тӗлӗшпе, Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ ноябрӗн 10-мӗшпе 30-мӗшӗ хушшинчи ҫирӗм куна авӑн ҫапса пӗтерессишӗн тата государствӑна тырӑ парса татассишӗн фронтри пек ӗҫлемелли ҫирӗмкунлӑх тесе пӗлтерчӗҫ. Районсем ҫак ҫирӗмкунлӑхра тумалли заданисене кӑтартса пачӗҫ.

Райсовет исполкомӗсемпе ВКП(б) райкомӗсен, МТС директорӗсемпе политотдел начальникӗсен авӑн ҫапмалли тата государствӑна тырӑ памалли заданисене ялсоветсемпе колхозсене тата трактор бригадисене халех ҫитермелле, кашни колхознике, колхозницӑна, трактористпа комбайнера ӗҫе хӑвӑртрах тума мобилизацилемелле. Райсовет исполкомӗсемпе ВКП(б) райкомӗсен, МТС директорӗсемпе политотдел начальникӗсен авӑн ҫапнӑ ҫӗрте кашни молотилкӑпа комбайна туллин ӗҫлеттерсе усӑ курасси ҫине уйрӑмах тимлӗн ҫавӑрса пӑхмалла. Молотилкӑсен талӑкра ҫапса кӑлармалли заданийӗсене палӑртса ҫирӗплетмелле, вӗсем патӗнче ӗҫлеме яланхи бригадӑсем тумалла. Кунсӑр пуҫне авӑна тӑпачӑпа та анлӑн ҫапмалла.

Государствӑна тырӑ парас ӗҫе те пилӗккунлӑх заданисем тӑрӑх туса пымалла, государствӑна тырӑ турттарма колхозсенче ялан ӗҫлекен бригадӑсем тумалла, вӑл бригадӑсене пилӗк кунхи задани тӑрӑх тырӑ турттарса ӗлкӗрме кирлӗ чухлӗ колхозниксем ҫирӗплетсе памалла. Государствӑна тырӑ парас ӗҫре ӗҫлекен колхозниксемпе колхозницӑсене вӗсем мӗн чухлӗ тырӑ турттарнипе шута илсе ӗҫкунӗсем памалла.

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ авӑн ҫапас тата вӑрлӑхлӑх курӑксен вӑррисене ҫапса илес ӗҫе халех вӗҫлеме хушаҫҫӗ. Ҫакна тума кашни молотилкӑпа комбайна тата трактора ӗҫе кӑлармалла, авӑна куннеҫӗрне пӗлмесӗр ҫапмалла. Вӑрлӑхлӑх курӑксене ҫапса илес ӗҫе молотилкӑсемпе те, алӑпа та анлӑн туса пымалла.

Ҫак ҫирӗмкунлӑх хушшинче республикӑри кашни колхоз, МТС авӑн ҫапса пӗтермелле, фронтри пек ӗҫлемелли ҫирӗмкунлӑхра социализмлӑ ӑмӑртӑва татах та анлӑн сармалла. ВКП(б) райкомӗсемпе райсовет исполкомӗсен хӑйсен районри активне колхозсемпе ялсовет исполкомӗсене ӗҫре конкретлӑн пулӑшма ямалла. Кашни колхозникпа колхозница фронтри пек ӗҫлемелли ҫирӗмкунлӑхӑн активлӑ участникӗ пултӑр, кашни колхоз ноябрӗн 30-мӗшчен авӑн ҫапса пӗтермелле, государствӑна тырӑ парса татмалла.

## Ҫулпуҫ доклачӗ татах та лайӑхрах ӗҫлеме хавхалантарать

ҪЕМӖРЛЕ, ноябрӗн 9-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци 25 ҫул тултарни ҫинчен Сталин юлташ тунӑ доклад чугунҫул ҫинчи работниксене татах та лайӑхрах ӗҫлеме хавхалантарать. Станцири дежурнӑйсемпе стрелочниксем тата лини ҫинчи рабочисем ҫулпуҫ сӑмахӗсене тивӗҫлипе пурнӑҫласа пыма, фронта пулӑшассине вӑйлатма пулчӗҫ.

Ӗнер каҫхине станцире ӗҫлекенсен пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пухура ҫулпуҫ докладне ӑнлантарса пачӗҫ. Стахановец-дежурнӑй коммунист Потапов юлташ доклад пирки ҫапла каларӗ:

— Сталин юлташ тӑван Хӗрлӗ Ҫар умне гитлерла захватчиксемпе вӗсен руководителӗсене пӗтерсе тӑкас задача кӑларса тӑратрӗ. Ҫак задачӑна пурнӑҫа кӗртнӗ ҫӗрте эпир, железнодорожниксем, фронта пысӑк пулӑшу паратпӑр. Чугунҫул транспорчӗ—Хӗрлӗ Ҫарӑн пӗрремӗш помощникӗ,—терӗ вӑл.

Чугунҫул ҫинче ӗҫлекенсем Сталин юлташӑн докладӗнче кӑларса тӑратнӑ задачӑсемпе паллашнӑ хыҫҫӑн ҫав задачӑсене пурнӑҫлас тӗлӗшпе малашне мӗн-мӗн тумаллине палӑртса резолюци йышӑнчӗҫ.

**Х. ЛИСИН.**

# Пӗтӗм тӗнчери общественность Сталин юлташӑн докладне сӳтсе-явать

**АНГЛИЯ.**

ЛОНДОН, ноябрӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Сталин юлташӑн Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци 25 ҫул тултарни ҫинчен тунӑ доклачӗ Англири халӑха питӗ интереслентернӗ. Доклад пӗтнӗ хыҫҫӑн часах унӑн содержанине Лондонри радио тӑрӑх пама тытӑннӑ. Ноябрӗн 6-мӗшӗнче каҫхине тата ноябрӗн 7-мӗшӗнче ирхине Англири мӗнпур радиостанцисем И. В. Сталин юлташӑн пӗтӗм докладне англичан, француз, чех, норвежец, нимӗҫ, испанец, итальянец тата ытти чӗлхесемпе каласа панӑ.

Ирхине тухакан пур хаҫатсем те Сталин юлташӑн докладне тӗплӗн каласа паракан статьясене курӑнмалла вырӑнта пичетленӗ, вӗсем Германин 1942 ҫулхи планӗ арканса кайни ҫинчен, Гитлера хирӗҫле коалици ҫирӗп пулни ҫинчен тата иккӗмӗш фронт уҫасси ҫинчен каланӑ вырӑнсене уйрӑмах палӑртса пичетленӗ.

Пичетре радио Сталин юлташӑн историллӗ доклачӗн тӗп шухӑшӗсем ҫинчен нумай ҫыраҫҫӗ, нумай калаҫаҫҫӗ.

Рейтер агентствин дипломати обозревателӗ ҫапла ҫырать:

«Сталинӑн сӑмахӗ вӑл—вӑйлӑ ҫыннӑн сӑмахӗ, хӑйне хӑй шанакан, хӑйӗн армине шанакан, рабочисене шанакан, хӑй ҫӗнтерессине шанакан ҫыннӑн сӑмахӗ пулса тӑрать. Вӑл мухтаса е ҫиленсе е хумханса каланӑ сӑмах мар. Сталин лару-тӑру ҫинчен уҫӑмлӑн та реализмлӑ каласа панӑ. Вӑл иккӗмӗш фронта уҫасси чарӑнса тӑнӑ пирки ӳпкелешсе каланӑ пулсан, унӑн кӑмӑлӗ мӗншӗн ҫапла пулнине ӑнлантарса пама ҫӑмӑл. Наступлени тума панӑ сӑмах пурнӑҫланасси пӗр вырӑнсем ҫеҫ мар кӗтсе тӑрасҫӗ. Вӑл, кам пӗлет, Египетри кампание ҫителӗклех хакламан; Египетри кампани вӑл, цифрӑсем енчен илсен, Российӑри калама ҫук пысӑк операцисен шайӗнчен пӗчӗккӗ пек курӑнать. Анчах та вӑл иккӗмӗш фронт халь мар пулсан, каярахпа та пулин уҫӑлассине шанса каланӑ, ҫавӑн пекех тата Гитлера хирӗҫле коалици ӗҫӗсем юлашкинчен ҫӗнтерӳпе вӗҫленессине ӗненсе каланӑ». «Сталин,—тесе ҫырать малалла обозреватель,—виҫӗ аслӑ тӗллев лартнӑ, вӗсем ҫаксем: гитлерла Германие, унӑн ҫарне тата «ҫӗнӗ йӗркене» пӗтермелле. Ҫак тӗллевсене тӗнӗл держависене хирӗҫ кӗрешекенсен ретне тӑнӑ кашни государство, кашни ҫын ырӑ кӑмӑлпа йышӑнӗ».

«Таймс» хаҫат хӑйӗн умстатьинче ҫапла ҫырать:

«Кам пӗлет, 1942 ҫулхи ноябрӗн 7-мӗшне хӑҫан та пулсан—вӑл пӗрлешнӗ нацисен стратегийӗ оборонӑран наступление татӑклӑн куҫма тытӑннине кӑтартакан маяк пулса тӑрать, тесе аса илӗҫ», тет. Хаҫат Сталин Англипе Совет Союзӗ хушшинчи туслӑх ҫирӗпленнине кӑтартнине палӑртса парать те ҫапла ҫырать: «Хӗвеланӑҫ Европӑра 1942 ҫулта вӑрҫӑ ӗҫӗсем пуҫлассине вӑхӑтлӑха чарса тӑма пысӑк сӑлтавсем пур пулин те, Сталинӑн докладӗнче ҫавӑн пирки ӳпкелешсе каланине ӑнланма пулать», — тет. Хаҫат Англие Совет Союзӗпе килӗштерсе ӗҫлемешкӗн ытларах тӑрӑшма сӗнет, Совет Союзӗ «халь те, пулас вӑхӑтра та Англин Европӑри политикин тӗп пункчӗ пулса тӑрать», тет.

**США**

НЬЮ-ЙОРК, ноябрӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Оборонӑн Государственный Комитечӗн Председателӗ Сталин юлташ ӗҫҫынни депутачӗсен Мускав Совечӗн Мускаври парти тата общество организацийӗсемпе пӗрле пухнӑ чаплӑ ларӑвӗнче тунӑ доклад Америкӑри общественноҫшӑн тӗп вырӑнта тӑрать.

Америкӑри чи пысӑк радиостанцисем Сталин юлташӑн докладне радио тӑрӑх парас тесе хӑйсен яланхи трансляцийӗсене чарса лартнӑ. Пӗрлешӳллӗ Штатсенчи радиостанцисем Сталин юлташӑн докладне англичан, француз, испанец тата португалец чӗлхисемпе тӗплӗн каласа панӑ.

Сталин юлташӑн историллӗ докладне тӗплӗн каласа паракан статьясене пур хаҫатсем те курӑнмалла вырӑнта пичетлеҫҫӗ.

**ШВЕЦИЯ.**

СТОКГОЛЬМ, ноябрӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Сталин юлташӑн Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци 25 ҫул тултарни ҫинчен тунӑ докладне Швецире пысӑк интереспе кӗтсе илнӗ. Стокгольмри радиостанци Сталин юлташӑн докладне радио тӑрӑх тӗплӗн каласа панӑ.

**ШВЕЙЦАРИЯ.**

ЖЕНЕВА, ноябрӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Швейцарири радиостанцисем паян Сталин юлташӑн докладне тӗплӗн каласа панӑ.

**ЛАТИНЛА АМЕРИКА.**

НЬЮ-ЙОРК, ноябрӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Сталин юлташӑн Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци 25 ҫул тултарни ҫинчен тунӑ доклачӗ латинла Америкӑри мӗнпур ҫӗршывсене питӗ интереслентернӗ.

# Америка войскисем Францин Ҫурҫӗр Африкине пырса аннӑ

ЛОНДОН, ноябрӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Америка войскисем Ейзенхауэр генерал ертсе пынипе Францин Ҫурҫӗр Африкине нумай тӗлте пырса аннӑ. Ҫав операцире ҫӗр ҫинчи войскӑсем, флот тата авиаци хутшӑнса кӗрешеҫҫӗ.

Шурӑ Ҫурт каланӑ тӑрӑх, Америка войскисем унта Германипе Италие пырса кӗме чарас шутпа аннӑ.

Рейтер агентстви ҫапла пӗлтерет: Америкӑн хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене Англи ҫарӗ ҫийӗнчех чылай пысӑк пулӑшу парӗ, тет.

Америкӑпа Англи самолечӗсем Францири хуласем ҫине Англипе США правительствисем Франци халӑхне чӗнсе калакан хутсене пӑрахнӑ.

## Англи Египетра наступлени тӑвать

ЛОНДОН, ноябрӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Англин Ҫывӑхри Хӗвелтухӑҫӗнчи вӑйӗсен командованийӗ ҫапла пӗлтерет: Англин 8-мӗш ҫарӗ ноябрӗн 7-мӗшӗнче противникӑн Ливипе Египет чикки патнелле чакса пыракан бронетанковӑй вӑйӗсене малалла хӑваласа пынӑ. Тӑшманӑн Англи ҫарне Мерса-Матрух патӗнче тытса чарма хӑтланнӑ чаҫӗсене ҫавӑрса илнӗ. Эль-Аламейн патӗнче Германи союзникӗ Итали пӑрахса хӑварнӑ войскисене ҫавӑрса илесси малалла пырать. Италин виҫӗ дивизийӗн штабӗсен личнӑй составне тыткӑна илнӗ.

## Англи авиацийӗ Генуяна тапӑнни

ЛОНДОН, ноябрӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви ҫапла пӗлтерет: ноябрӗн 8-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле Англи самолечӗсем каллех Генуя ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Ку атака иртнӗ ҫӗрхинчен вӑйлӑрах пулнӑ. Темиҫе пысӑк пушар тухнӑ.

## Мадагаскарта перемири тунӑ

ЛОНДОН, ноябрӗн 6-мӗшӗ. (ТАСС). Ҫар министерстви ҫапла пӗлтерет: Виши правительстви Мадагаскарӑн генерал-губернаторӗ урлӑ ыйтнӑ тӑрӑх, ноябрӗн 5-мӗшӗнче ҫав утрав ҫинче вӑрҫӑ ӗҫӗсене чарса лартнӑ.

Ответлӑ редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

**К СВЕДЕНИЮ СОВХОЗОВ, КОЛХОЗОВ, КОЛХОЗНИКОВ И ЕДИНОЛИЧНИКОВ**

Чебоксарская контора Заготскот с 6-го по 30-е ноября производит прием скота в счет мясопоставок на Чебоксарском скотобойном пункте (Кировский поселок).

**Чебоксарская контора Заготскот.**

Межрайонной промартели УТИЛЬСЫРЬЕ **требуется главный бухгалтер.** Квартирой обеспечивается. Обращаться: улица Пионерская, дом № 17, контора промартели УТИЛЬСЫРЬЕ.

Имеется **присталая лошадь,** трех лет, гнедая, на лбу звезда. Справиться в колхозе «Осоавиахим», Заводского сельсовета, Чебоксарского района, дер. Кошкино.

1/XI—42 г. в Чебоксарах (близ ликеро-водочного завода) пропала лошадь—мерин рыжей масти, на лбу звезда, на задней левой ноге белое пятно.

Знающих местонахождение таковой просим сообщить по адресу: Сундырский район, Калининский с/совет, колхозу „Гигант".

Чебоксарская райконтора „Заготживсырье" производит продажу живых племенных кроликов ангорской породы (пуховые) для разведения.

За справками обращаться: ул. **Волжская,** № 1, телефон 3—50, 1 звонок.

**ЧЕБОКСАРСКОМУ ЛИКЕРО-ВОДОЧНОМУ ЗАВОДУ ТРЕБУЮТСЯ:**

Тракторист на гусеничный трактор ХТЗ, шофер и работницы для работы в цеху.

Обращаться по адресу: Чебоксары, ул. Чувашская, ликеро-водочный завод, к главному инженеру.

**Чувашскому тресту «Росглавхлеб»** требуются: главный бухгалтер, бухгалтер, нормировщик.

Обращаться: Чебоксары, Калинина, 6, телефон № 7—93.

**Пропала лошадь,** светло-рыжей масти, мерин, на лбу седина, рост 135 см.

Знающих местонахождение просим сообщить по адресу: колхоз «Трудовик», Абашевского с/совета, Чебоксарского района.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОН СЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн — 4—26, пропагандӑпа парти пурнӑҫ пайӗн — 3—93, ялхуҫалӑх пайӗн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НЦ 11254 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.